# ÇАМРĂКСЕН ПУЛТАРУЛĂХĔ САВĂНТАРАТЬ



КУН ПЕК выставкă халиччен пулманччĕ-ха. Республикăри çамрăк художниксен произведенийĕсене, хăйне уйрăм выставкă туса, пĕрремĕш хут кăтартрĕç.

Кăçал Мускавра çамрăк художниксен Пĕтĕм Союзри выставкине ирттерме йышăннă. Шупашкарти выставкăна унта кăтартма тивĕçлĕ произведенисем суйласа илес шутпа йĕркеленĕ. Анчах ăна хăçан тата мĕнле «программăпа» ирттересси çинчен малтан пĕлтерсе хуман. Нумай авторсемшĕн çакă вара кĕтмен япала пулчĕ. Выставкă комиссийĕ кам мĕн илсе килнĕ, çавна çеç пăхса тухнă. Çапла вара, çамрăксен выставки республикăри художниксен пултарулăхне тĕпренех уçса параймасть. Чăваш художникĕсен коллективĕ выставкăра кăтартнинчен чылай вăйлăрах, вĕсен пултарулăхĕ анлăрах, ăсталăхĕ пысăкрах.

Апла пулин те, выставкăра республикăра ĕçлесе пурăнакан живописецсен, графиксен, скульпторсен тата прикладниксен ăсталăхĕ мĕнле ÿссе пынине йĕрлесе тухма май пур. Кунта тĕрлĕ пĕлÿ илнĕ, тĕрлĕ шкулсенче вĕреннĕ çынсен пултарулăхне аван куратăн. Мускаври, Ленинградри, Харьковри, Таллинри, Тбилисири тата ытти хуласенчи художествă академийĕсемпе институчĕсенчен вĕренсе тухнă çынсем халĕ пирĕн республикăра ăнăçлă ĕçлеççĕ.

Нумай пулмасть чăваш художникĕсем живописьре çуллă сăрăсемпе, графикăра тушьпа тата перопа çеç ĕçлетчĕç, скульптурăра вара, гипссăр пуçне, нимĕнле материалпа та усă курсах каймастчĕç. Çамрăк художниксем ку тĕлĕшпе те ырă тĕслĕх кăтартаççĕ. Вĕсем чăннипех халăха кирлĕ темăсем суйласа илме пĕлеççĕ çеç мар, çав темăсене тарăнрах, интереслĕрех уçса пама май паракан материалсемпе майсем шыраççĕ. Темперă (А. Миттов), акварель (Н. Садюков), карас ăвăсĕпе пĕрле тунă акварель (А. Елсукова), çуллă сăрăсемпе тунă монотипи (В. Чураков, Е. Вдовичева, Н. Карачарсков), йывăçран касса тунă скульптурă (И. Слободова, В. Черепанов)—мĕнле техникă çук пулĕ кунта. Линогравюрăра та майсем нумай иккен (В. Авраменко, И. Григорьев, Т. Ампар). Çамрăксен выставки тематикă тĕлĕшĕнчен унччени выставкăсенчен пĕртте кая мар. Н. Садюковăн акварельпе сăрласа тунă «Шупашкар—тăван хуламăр», «Мускав ÿсет» ятлă ÿкерчĕксен ярăмĕсене «ÿссе çитнĕ» авторсем те вăтанмасăрах кăтартнă пулĕччĕç. С. Головатый «Мирлĕ пурнăç телейĕ» ярăмран илсе кăтартакан уйрăм линогравюрăсене курсан, çак ярăм чăннипех пысăк пĕлтерĕшлĕ произведени пуласса шанас килет. В. Авраменкăн «Роковые сороковые» ятлă гравюрисен ярăмĕ те совет халăхĕн паттăрлăхне туллин уçса паракан пысăк произведени пулмалла. А. Миттов чăваш халăхĕн ĕлĕкхи пурнăçне, йăли-йĕркисене аса илтерекен картинăсем çырма тăрăшнă. И. Слободова Нарспи сăнарне хăй ăнланнă пек уçса пама шутланă. Э. Юрьев космосри çитĕнÿсемпе палăрнă çирĕммĕш ĕмĕр пĕлтерĕшне ытарлă сăнарсем урлă кăтартма ĕмĕтленнĕ. Т. Ампар художник Кавказра пурăнакан пĕчĕк халăх—абхазсем—ирĕклĕхпе телейшĕн ĕмĕрĕпех паттăр кĕрешни çинчен, çав телее ăçта тата мĕнле майпа тупни çинчен калакан линогравюрăсен ярăмĕн пĕр пайне кăтартнă. Асăннă произведенисене авторсем халлĕхе вĕçлесех çитереймен-ха. Хăш-пĕр авторсемпе хытах тавлашма та пулать-и, тен, анчах вĕсем чăннипех паха ĕç тума пуçланине тата ăна, пĕтĕмпе илсен, ăнăçлă туса пынине йышăнмасăр тăма çук.

Çамрăк художниксем пирĕн вăхăтри çынсен сăнарне портретсенче кăтартма тăрăшни питĕ кăмăллă. В. Черепанов («В. В. Николаева-Терешкова»), В. Немцев («Чăх чĕп пăхакан», «Конюх»), В. Чураков («Наташа»), Н. Ведерников («Анне») тата ытти живописецсемпе скульпторсем тунă портретсем пирĕн художниксем ку жанр енĕпе те аван ĕçлеме пултарнине ĕнентереççĕ. Уйрăмах Н. Карачарсков ÿкернĕ портретсем паха. Унăн «Ашшĕпе хĕрĕ», «Пĕр полкри тусем», «Выльăх пăхакан», «Асаттесен юррисем», «Асатте патĕнче», «Кудеихă строителĕсем» ятлă ĕçĕсем хăйне евĕрлĕ жанрлă картинăсем пулса тăраççĕ.

Э. Юрьев, В. Емельянов, В. Агеев художниксем кĕнекесем валли ÿкерчĕксем туса, Б. Макаровпа Е. Вдовичева тата И. Григорьев натюрмортсемпе пейзажсем сăрласа, пир-авăр комбинатĕнче ĕçлекен ăстасем пир-авăр валли хитре ÿкерчĕксем хатĕрлесе тата ытти нумай тĕрлĕ жанрсенче ĕçлесе, тăван республикăн пурнăçне çеç мар, аслă çĕршывăмăрăн пĕтĕм пурнăçне ытамласшăн, коммунизм тăвакан халăхăн сăнарне тарăн уçса парасшăн.

Юлашкинчен, çамрăк художниксен профессиллĕ ăсталăхĕ палăрмаллах ÿсни çинчен калас килет. В. Агеев, Э. Юрьев, В. Авраменко, Т. Ампар, И. Григорьев, Н. Карачарсков, В. Чураков тата ытти нумай авторсем хăйсем мĕн курни-илтнине, шухăшлани-ĕмĕтленнине кашни çын чĕрине тыткăна илмелле, пĕр курсан, манмалла мар илемлĕ те хăйне евĕрлĕ туса кăтартма тăрăшаççĕ.

Шупашкарти выставкă, республикăри художниксен мĕн пур пултарулăхне пĕтĕмпех уçса параймасть пулин те, тăван искусствăри паха улшăнусене, унăн пысăк малашлăхне анлăн кăтартать.

А. ГРИГОРЬЕВ.
Искусствовед.

Укерчĕксем çинче: Н. Карачарсковăн «Кудеихăри строительсем» (çÿлте), А. Миттовăн «Чăвашсен ĕлĕкхи пурнăçĕнчен» (аялти) картинисем.

Фоторепродукцийĕ авторăн.

